**Чи маттурри — Урине**

Пирĕн куршĕри Семенсем анкартинче çĕр улми кăлараççĕ. Çемйипех тапса тухнă ĕçе. Ачасем те — Павăлпа Микиш, Уринепе Сашук — пысăккисемпе пĕрле тăрмашаççĕ. Çитĕнсе çитнисем кăларассĕ, пĕчĕккисем пухаççĕ. Пуринчен те кĕçĕн Урине уйрăмах ларма-тăма пĕлмесĕр тăрмашать.

Çĕр улми кăларасси — сивĕ кĕркуннере те питĕ хĕрӳ ĕç.

Пĕр кана ĕçлесен, Павăл Микишпе Сашука хăй патне чĕнсе илчĕ:

— Эсĕ, Микиш, хăвăн сылтăм аллупа пĕр харăсах миçе çĕр улми тытма пултаратăн? — ыйтрĕ вăл. — Эпĕ ав ывăçа виçĕ çĕр улми кĕртме пултартăм!

— Вĕттисене пухсан çирĕм те кĕртме пулĕ, — хуравларĕ Микиш. Хăй çавăнтах сылтăм аллипе вĕтĕ çĕр улмисем пухма тытăнчĕ.

Сашук та унран юлмарĕ.

— Ак вуннă, — пĕлтерчĕ вăл тепĕртакран.

— Ман вун пĕр, — хушса хучĕ Микиш.

Арçын ачасем хушшинче мăйăр мăнăш çимĕç пухассипе ăмăрту хĕрнĕçемĕн хĕрсе пычĕ, пурте вĕтĕрех те вĕтĕрех çĕр улмисем шырама тытăнчĕç.

— Ман ывăçа вун пилĕк çĕр улми кĕчĕ! — терĕ савăнаçлăн Павăл.

— Манне те вун пилĕк.

— Мĕн тăватăр çак эсир? — ыйтрĕ ачасенчен амăшĕ.

— Хăшĕн алли пысăкраххине пĕлес тетпĕр-ха, — терĕ Павăл.

— Хăшĕн пысăкрах вара?

— Манăн! — пуçне каçăртрĕ Павăл. — Эпĕ юлашкинчен вун çичĕ çĕр улми пухса илтĕм.

— Урине сирĕнпе ăмăртмарĕ, — терĕ амăшĕ. — Анчах та унăн алли сирĕннинчен чылай пысăккине, Урине сирĕнтен пуринчен те маттуррине эпĕ аякранах асăрхарăм.

— Хăрах аллине вăл, пукане пекскер, виç-тăватă çĕр улми те кĕртеймест-иç, анне, — хирĕçлеççĕ арçын ачасем харăссăн.

— Мĕнлерех кăна кĕртет-ха. Эсир çапла айланнă хушăра вăл çиче витре çĕр улми пухса хучĕ. Вăт мĕн пек пысăк унан алли, вăт еплерех маттур ман пĕчĕк Урине!

Арçын ачасем палăрмаллах хĕрелсе ĕçе пикенчĕç.

*Енĕш, В. Чи маттурри Урине : [калав] / В. Енĕш // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2015. – [Т. 4] : Ача-пăча вали çырнă хайлавсем. – С. 321.*